Пирён интервью

Пенсионерсен союзё ватă çынсен интересёсене хӳтёлет

Пётём тёнчери ватă çынсен кунё умён пирён хаçат корреспонденчё «Раççей пенсионерёсен союзё» обществăлла организацин Чăваш регион уйрăмён ертӳçинчен Валерий САПОЖНИКОВРАН интервью илнё.

– Валерий Васильевич, хăвăрăн организаци, унăн тёллевёсемпе задачисем пирки тёплёнрех каласа параймăр-и?

– Хальхи вăхăтра çак организацин Чăваш регион уйрăмёнче 10 пине яхăн çын шутланать. Ку вăл аслă ăру çыннисен интересёсене хӳтёлекен сумлă организаци. Республикăн пур районёсемпе хулисенче те унăн полномочиллё представителёсем пур. Вёсем – вырăнсенче ятлă-сумлă çынсем. Вёсемшён ватă çынсен, çёршыв, республика, тăван хула е район шăпи ют мар.

Эпир политика организацийё мар. Пире пенсионерсен партийёпе ан пăтраштарăр. Эпир хамăр ума Патшалăх Думине çул тупас евёр политика задачисене татса парас ыйтăва лартмастпăр, умри паянхи ыйтусене пёрле татса парас тетпёр. Хальхи вăхăтра вара ватă çынсем умёнче тăракан задачăсем сахал мар. Пёлетпёр, критикленипе кăна вёсене татса пама çук. Хамăрăн çак ёçе кӳлёнес пулать тетпёр.

Акă пенсионерсене социаллă пулăшу парассипе Пенси фончён уйрăмёпе пёрле вырăнсене тухса тёрёслевсем иртте-ретпёр. Кунпа пёрлех обществăлла самоуправленин территори институчё урлă та хамăра кăтартма май пур тесе шутлатăп.

– Пенсионерсен интересёсене хӳтёленё чухне эсир ытларах чухне «Единая Россия» партипе, Пенси фончёпе пёрле ёçлесе пынине палăртатăр. Мёншён-ха пёрле ёçлеме «Единая Россия» партие суйласа илтёр?

– Эпир влаç органёсемпе, вырăнти самоуправленипе ёçлеме хатёр. Мёншён тесен хамăр республика Президенчён Николай Федоровăн ёçён курăмлă результачёсене курса тăратпăр. Республикăн, ялсемпе хуласен сăн-сăпачё улшăнать, таврара йёркеллё, хитре. Çынсем те тăван тавралăх çине урăхларах пăхма пуçăнаççё, вёсен хутшăнăвёсем те ырă еннелле улшăнаççё. Пуçтахланасси, хулиганла хăтланасси чакса пырать.

Пенсионерсен союзё – хăй тёллён ёçлекен, ватă çынсен интересёсене хӳтёлекен организаци. «Единая Россия» партипе вара эпир ку партире сăмахпа ёç çыннисем пулнă пирки пёрле. Нумай пулмасть кăна Раççей Патшалăх Думинче «Единая Россия» партин парламентри ытларах ушкăнё пенсисен база пайне 13 процент ӳстерессишён сасăларё. Кунпа пёрлех тата ку парти çине Раççей Президенчё Владимир Путин та пысăк шанăç хуни пирки те эпир ăна шанатпăр.

– «Пирён атте-анне», «Пирён хула» проектсене хутшăнатăр-и?

– Паллах тата тӳрремёнех. Конкурссене иккёмёш çул иртте-реççё ёнтё. Вёсене иртте-рессипе «Единая Россия» парти пуçару турё. Йёркелӳçёсем шутёнче çавăн пекех Раççей пенсионерёсен союзё, пётём Раççейри вырăнти самоуправлени канашё тата «Культурăпа право» обществăлла организаци.

Ку проектсенче тёп тёллев çӳлтен пăрахса парасса кётсе ларни мар, хамăрăн активлăх! Çапла вара ватă çынсен пурнăçне лайăхлатассипе, ялсене тирпей-илем кёртессипе, тавралăха сыхлассипе, тёрлёрен социаллă проектсене пурнăçа кёртессипе çыхăннă конкретлă пуçарусем валли те укçа-тенкё уйăрса парёç.

– Союзăн юлашки пуçарăвё – пенсионерсен компьютер клубё. Ялти клубсенче те кун пек курссем уçалёç-и?

– Компьютер клубёсем пенсионерсем валли пёр-пёринпе хутшăнмалли тата ăс-тăна аталантармалли вырăн пулса тăчёç. Кирек кам та хутшăнмасăр, информацисёр пурăнма пултаймасть. Уйрăмах информаци технологийёсем хăвăрт аталаннă тапхăрта. Нумай отраслсемпе тата ыйтусемпе, информаци ресурсёсене аталантарассипе те Чăваш Ен пилотлă регион пулса тăрать. Пирён патра тахçанах пур шкулсене те Интернетпа çыхăнтарнă, районсемпе хуласен администрацийёсенче пурте усă курма пултаракан обществăлла центрсем уçнă. Çавăнпа та кун пек клуб ватă çынсемшён – пурнăçа кёртекен питех те вăхăтлă проект. Ку енёпе ёçсем хуласенче те, ялла районсенче те пулса пыраççё.

– 2007 çулхи декабрён 2-мёшёнче Раççей Федерацийён Патшалăх Думин депутачёсене суйламалла пулать. Суйлав кампанине хутшăнассипе Пенсионерсен союзён задачисем, вырăнёпе пёлтерёшё мёнлерех?

– Ку суйлава çёршыв çирёплетнё партипе политика списокёсемпе хутшăнать. Пире суйлава 15 политика партийё хутшăнма ирёк илнё тесе каласçё пулин те, чылайăшё уйрăмах паллă 4-5 партие, вёсен лидерёсен ячёсемпе программисене тӳрех аса илме пултарё-и-ха? Хаçат урлă вара пенсионерсене, ватă çынсене асăрхаттарасшăн. Пирён Раççей пенсионерёсен союзё нимёнле актуаллă е актуаллă мар сулахай партисемпе те пёрле мар. Ёненессе те эпё вăхăтлăх политика килёшёвёсене мар, конкретлă ёçсене ёненетёп.

Сăн ӳкерчёкре: парта хушшине тепёр хут – информатикăна вёренме.

Ватлăх кунёсем канлё иртчёр

Ватă çын хисепре

Çамрăк чухнехи вăхăт ытла та васкавлăн иртнён туйăнать-çке. Тăтăшах ёçе васкатăн, ача-пăчашăн тăрăшатăн. Çул хыççăн çул каять, çамрăклăх хыçа юлать. Çавăн пекех ватлăх кунёсем те пёр именмесёрех алăкран хăюллăн шаккаççё. Кун пек чухне вара аслă ăрури çынсене уйрăмах тимлёх, ăшă кётес кирлё. Çавăн пекех ватă çынсене хисеплесе юпа уйăхён пёрремёшёнче уяв ирттересси те ырă йлана кёнё. Тин çеç уçалнă Каршлăхри ёçпе вăрçă ветеранёсен интернат-çуртёнче вара уяв çывхарса килнине ытларах туйрёç. Ăна валли сăлтавё те пулчё. Республика шайёнчи интернат-çуртра Мăн Сёнтёр шкулёнче чылай çул ачасене вёрентнё Любовь Арсентьевна Васильева пенсионерка хӳтлёх тупнă. Ăна хисеплесе унăн вёренекенё Валерий Иванович Маринкин йывăçран тунă кравать тата шифоньер туянса пачё. Çакă вара уяв парни пулчё те ёнтё. Пурах çав ырă кăмăллă çынсем пирён хушăра. Çавăнпа та Валерий Ивановича эпир чун-чёререн тав тăватпăр. Ырлăх, сывлăх, телей сунатпăр ăна.

Сăмах май палăртса хăварар. Каршлăхри интернат-çуртра хӳтлёх тупнă Муркаш районён хисеплё, ырă ёçпе палăрнă ватă çыннисем татах та пур. Акă Мăн Хураçкари Галина Павловна Башмакова çамрăк чухне Чăваш Республикин тёп хулине çёкленё çёрте чылай тăрăшнă. Апла пулсан Шупашкар уннăн питё çывăх кётес шутланать.

Кăпаçри Юлия Петровна Фомина Муркаш район аталанăвёшён пысăк тӳпе хывнă. Çавăн пекех тăваттăмёш хисеплё çын вăл – Владимир Семенович Кудряшов. Çар çынни пулнăскер, чылай çул хушши Мускав хулинче пурăннă. Халё ёнтё вёсем пурте кунта пёр çемьери пек пурăнаççё.

Ватта сума сăвакан хăй те сумлă пулакан, теççё халăхра. Эпир, çакăнта ёçлекенсем, хамăртан мён килнине йăлтах пурнăçлама тăрăшатпăр. Сывлăхёсем çирёп, ватлăх кунёсем канлё пулччăр тетпёр. Уяв çитнипе усă курса вара пурне те ăшпиллёх сунатпăр.

Каршлăхри интернат-çуртра ёçлекенсем.

Спорт хыпарёсем

Хёрсем маттур пулнă

Сентябрён 22-мёшёнче Çёнё Шупашкар хулинче велоспорт енёпе Чăваш Республикин кубокне çёнсе илессишён пыракан финал ăмăртăвёсем иртнё. Унта ачасемпе çамрăксен Валентина Егорова ячёпе хисепленекен спорт шкулёнче ăсталăх туптакан хёрсен Орининти ушкăнё те хутшăннă, япăх мар кăтартусем тунă. 1992-1993 çулсенче çуралнисем хушшинче Света Лаптева 2-мёш, Маргарита Порфирьева 3-мёш, 1996-1997 çулсенче çуралнисем хушшинче Таня Кулакова 1-мёш, Зоя Вязова 2-мёш, Света Данилова 3-мёш вырăнсене тивёçнё. Пултаруллă спортсменсене ăмăртăва хатёрлекенё – И.В. Воробьев тренер.

Сăн ӳкерчёкре: ăмăртăва хутшăннă хёрсем хăйсен тренерёпе.

Хăвăрт утассипе ăмăртса

Çав кунах Канаш районёнче РФ тава тивёçлё физкультура ёçченё В.М. Краснов ячёпе хăвăрт утассипе республика ăмăртăвёсем иртнё. Унта вара асăннă спорт шкулёнчи Тойкилтё уйрăмёнчи çамрăк спортсменсем вăй виçнё. 1994 çултан çамрăкрах хёрсем хушшинче финишра Ирина Портнова 1-мёш, 1992-1993 çулсенче çуралнă яшсем хушшинче Рома Емельянов 3-мёш пулнă. Тренерё – А.В. Васильев.

Кунпа пёрлех спортсменсене ăмăртăва хутшăнма автотранспортпа тивёçтернёшён Н.Г. Михайлов уйрăм предпринимателе тав сăмахё каламалла.

РФ Патшалăх Думин депутачён парнисемшён

Сентябрён 29-30-мёшёсенче Çёнё Шупашкарта ачасемпе çамрăксен 1-мёш номерлё спорт шкулёнче (Пионерсен урамё, 1-мёш çурт) РФ Патшалăх Думин депутачён, «Единая Россия» фракци членён Павел Семеновăн парнисене çёнсе илессишён ирёклё майпа кёрешекенсен республика турнирё иртет. Ăмăрту 10 сехетре пуçланать, савăнăçлă лару-тăрура ăна 14 сехетре уçаççё. Турнира ирттерме Раççей спорт кёрешёвён федерацийё пулăшать. Турнирăн хисеплё хăнисем – тёнче, Европа чемпионёсемпе Олимп вăйăисен çёнтерӳçисем. Чăваш Ен кёрешӳçисен шкулён мухтавлă традицийёсене малалла аталантарар. Вăйлă Раççей – «Пёрлёхлё Раççей».

Пёлтерӳсем. Объявления

Халăхран хаклă хакпа вăкăр, тына, ёне ашпа тата чёрё виçепе пуçтаратпăр. Тел.: 8-909-304-08-81, 38-2-89.

ЗАКУПАЕМ ПО ДОРОГИМ ЦЕНАМ:
- упитанных быков, телок, коров в живом виде;
Телефон для справок: 60-662, 8-9603051597 звонить в любое время суток. Герман. 3-3.

Закупаю свинину. Тел.: 8-927-854-96-32, 2-13-77. 5-8.

Халăхран лайăх хакпа ёне, вăкăр, тына ашпа тата чёрё виçепе пуçтаратпăр. Тел.: 60-7-10, 8-905-343-60-63. 4-4.

5 октября в Моргаушском РДК Ульяновская обувная фабрика проводит расширенную продажу обуви из натуральной кожи и других фабрик России.

3 октября 2007 г. с 8 до 15 часов в библиотеке с. Большой Сундырь Ульяновская обувная фабрика проводит расширенную продажу обуви из натуральной кожи и трикотажных изделий.

Утерянное удостоверение участника боевых действий на имя Важорова Владимира Николаевича прошу считать недействительным.

Молодая семья из двух человек снимет квартиру в с. Моргауши. Тел.: 8-927-862-90-83.

Продаю автомашину УАЗ бортовой, в хорошем состоянии, двигатель 100 л.с. Тел.: 8-906-135-53-25, 8-905-341-69-25. 2-2.

Продается двухкомнатная квартира в с. Моргауши. Тел.: 8-960-305-15-77.

Декабрь уйăхёнче пёрремёш хут пăруламалли хёрлё тёслё тынашка сутатпăр. Ыйтса пёлмелли телефонёсем: 2-24-96, 8-905-027-88-40.

Октябрь уйăхёнче пăруламалли хура-шурă тёслё тынашка, март уйăхёнче пиллёкмёш хут пăруламалли хура-шурă тёслё ёне сутатпăр. Уйкас Янасал ялё. Тел.: 46-2-23, 8-927-852-57-61, 8-927-857-95-46.

4 октября с 10 до 11 ч. в РДК Мир полезных товаров
Слуховые аппараты 10 моделей
Заушные и карманные от 1750 руб. до 7500 руб.
Серебряная вода. Ионаторы
Цены: 500, 1300, 2200 руб.
В продаже ультразвуковые стиральные машинки - 5 моделей, антихрап, отпугиватели грызунов, кротов, комаров, персональные сирены. Принимаем заказы почтой. Тел.: 8-922-503-63-15, г. Ижевск.

СПУТНИКОВЫЙ ИНТЕРНЕТ
8-927-666-93-95
СПУТНИКОВОЕ ТЕЛЕВИДЕНИЕ

К Международному дню пожилых людей ООО «Моргаушрайбыт» оказывает бесплатные услуги пожилым людям по стрижке волос 30 сентября, 1 и 2 октября.

Сентябрь уйăхёнче пёрремёш пăрулана хёрлё-ула (пăрушне уйăрман) тата ноябрь уйăхёнче 4-мёш пăруламалли хура-шурă ёнесем сутатпăр.
Çак адреспа ыйтмалла: Кӳстерек ялё, Макаров Вениамин Валерьянович, тел.: 8-927-865-12-44.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на правах аренды, для ведения личного подсобного хозяйства, из земель сельскохозяйственного назначения, без права строительства на нем, с кадастровым номером 21:17:17 04 01:0049, местоположение: участок находится примерно в 517 м по направлению на юго-восток от ориентира жилой дом, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинсое сельское поселение, д. Юдеркасы, ул. Новая, д. 26, площадью 6000 кв. м.

Заявления от граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на правах аренды, для ведения личного подсобного хозяйства, из земель сельскохозяйственного назначения, без права строительства на нем, с кадастровым номером 21:17:03 04 01:0083, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Вурманкасы, ул. Центральная, д. 8, площадью 5900 кв. м.

Заявления от граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты №№ 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.

Муркаш райпо коллективё «Винный погребок» лавккара сутуçă пулса ёçлекен Раиса Анатольевна Ярикован юратнă мăшăрё тата кунтах ёçлекен Раиса Николаевна Алексееван тăван шăллё

Сергей Николаевич
ЯРИКОВ

сарăмсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванёсемпе пёрле тарăннăн хурланни çинчен пёлтерет.

ГУП ЧР "Моргаушский издательский дом"
Моргаушская районная газета
"ÇЁНТЕРӲ ЯЛАВЁ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики "Моргаушский издательский дом".
Директор-главный редактор
А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: **morpress@cbx.ru**
Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу. Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, объем 1,5 п. листа. Тираж 3480. Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулёпе».
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 28.09.2007 г.
Заказ
Дежурный по номеру ШАПОШНИКОВ В.Л.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.

Номер набран и сверстан в ГУП "Моргаушский издательский дом", отпечатан (вкладыши - в ГУП "Моргаушский издательский дом") в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.